# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

*54 (7585) №* ✻ *Юн кун, 2008 çулхи июлĕн (утă) 23-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*


**Симĕс ĕç çи маршручĕсемпе**

## Кунта вăхăта усăсăр çухатмаççĕ

Çапла пĕтĕмлетӳ турăм эпĕ Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн симĕс ĕç çи пыракан уйĕсенче пулса унта ĕçлекен механизаторсемпе тĕл пулса калаçнă хыççăн. Кашниех пĕр шухăшлă ку енре: ял хуçалăхĕнче пушă та хуçасăр выртакан çĕрсем пулмалла мар, акнă-лартнă лаптăксемпе вара уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курмалла...

Хуçалăхра паян ĕçсем, тĕпрен илсен, икĕ енĕпе аталанса пыраççĕ: механизаторсем тĕп пулса калаçнă хыççăн... хирте. Вĕсемпе ĕçлекенсен тăрăшулăхĕ ума лартнă тĕллевсене пурнăçласса шантарать, – терĕ хире васканă май хуçалăх ертӳçи В. Андреев.



Пирĕн автомашина «уçман çерем» пулса кайиччен арендăна илнĕ «Чемеево» хуçалăхăн нумай çул ӳсекен курăксен пуссине çитрĕ. Çумăр курман утă (эпир унта иртнĕ эрне вĕçĕнче пултăмăр) таврана ырă шăршă сарнă. Типĕ курăк уттин шăрши... Епле техĕмлĕ вăл. Унри тутлăхлă япаласем çителĕклĕ тата кунашкал апат



кĕр аки валли меллĕ вырăнсем пулни пирки паян никам та иккĕленмест.

– Курăк ăнса пулнă кăçал. Унăн тутлăлăхне шывпа юхтарса яни чăн çĕр ĕçченĕшĕн калама çук пысăк намăс. Çĕр аннемĕр умĕнче пите хĕретес мар тесе ĕнтĕ ирхи сывлăмран каçхи сывлăмччен хирте эпир. Кашни ĕçех вăхăтлă пурнăçласа тулăх хĕл кунĕсем валли никĕс хывса хăварас тетпĕр, – шăкăл-шăкăл калаçать кăнтăр апачĕ çитсе пынине палăртса иртнĕ çул туяннă Польша агрегачĕпе утă преслакан трактора чарнă май Федор Журавлев механизатор кӳршĕлле ĕçлекен агрегатсем çинчен куç вĕçертмесĕр.

Хирте тăватă агрегат ĕçлет. Иртнĕ кунсенче Николай Ивашкинпа Федор Журавлев механизаторсем çулнă хулăн курăка валеме хывассипе кăçал туяннă агрегатпа пĕр чарăнмасăр Евстафий Филиппов каллĕ-маллĕ «чупать». Ун хыççăнах Федор Журавлев, Александр Архипов, Юрий Орлов **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** тытса пыракан пресс-подборщиксем типĕ утăна рулона пухаççĕ. Çĕнĕ техника тенĕрен, асăннă механизаторсен кустăрмаллă тракторĕсем те юлашки виçĕ çулта туяннăскерсем.

циленĕ пĕр бригада иртен пуçласан каçченех тырăллă сенаж хатĕрлессипе тимлет, теприсем вара ирхи сывлăмран каçхи сывлăмччен хĕл каçмалăх утă янтăлаççĕ.

– Вăхăт хăвăрт иртет. Умра – вырма. «Хир карапĕсем» тыр-пул пуссине тухиччен пропион кислотипе усă курса тырăллă сенажа икĕ пин тоннăран кая мар хурас тетпĕр. Çакна валли пур условисем те çителĕклĕ. Агрегатсем талăкĕпе майлах çитес хĕл кунĕсенчи тухăç никĕсĕ пулни каламасăрах паллă.

Сăмах май, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ ЧР Президенчĕн Указне пурнăçласа кăçал кӳршĕ хуçалăхсенчи 3 çул е ытларах выртакан «уçман çеремсене» 650 гектар майлă пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Вĕсене çуркунне вăхăтлă сухаланă та халĕ вĕсем çинче çумпа кĕрешессипе иккĕмĕш «суха» ĕçĕсем пыраççĕ. Ку çĕрсем çитес

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ июлĕн 22-мĕшĕ тĕлне 425 тонна утă, 350 тонна сенаж янтăлама ĕлкĕрнĕ. Ĕçсем малалла пыраççĕ. Хуçалăхри ĕçсем епле пынине унта пулсан пăхма кăмăллă.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ УТĂ УЙĂХĔН 22-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă (процентпа). 3. Утă хатĕрленĕ (тоннăпа). 4. Утă хатĕрленĕ (процентпа). 5. Сенаж хатĕрленĕ (процентпа). 6. Силос хывнă (процентпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 76 | 280 | 56 | 144 | 0 |
| «Волга» | 56 | 40 | 13 | – | 27 |
| «Восток» | 87 | 190 | 51 | – | 35 |
| «Герой» | 58 | 216 | 33 | – | 84 |
| К. Иванов яч. хис. | 6 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Агро-Урожай» | 34 | 20 | – | – | – |
| Ильич яч. хис. | 83 | 200 | 21 | 0 | 70 |
| ВТМ | 30 | – | – | – | – |
| Ленин яч. хис. | 29 | 10 | 2 | – | 0 |
| «Лидер» АФ | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 70 | 236 | 35 | 0 | 25 |
| «Передовик» | 27 | 170 | 52 | – | 4 |
| «Свобода» | 63 | 250 | 23 | 0 | 44 |
| «Сеятель» | 28 | 160 | 160 | – | 0 |
| Суворов яч. хис. | 67 | 425 | 59 | 17 | 0 |
| «Рассвет» АФ | 15 | 40 | 17 | – | 38 |
| «Ударник» | 64 | 645 | 34 | 40 | 43 |
| Чапаев яч. хис. | 31 | 66 | 16 | – | 33 |
| Чкалов яч. хис. | 100 | 330 | 109 | 0 | 50 |
| Мичурин яч. хис. | 73 | 30 | 0 | 0 | 0 |
| «Хлебороб» | 23 | 25 | 13 | – | 0 |
| «Колос» АПФ | 56 | – | – | – | – |
| КФХ Бархаткин | 61 | 20 | – | – | – |
| КФХ Толстов | 33 | 60 | – | – | – |
| ИП Горбунов В. | 100 | 40 | – | – | – |
| Ытти хуçалăхсем | 53 | 270 | – | – | – |
| **Районĕпе** | **47** | **3723** | **39** | **29** | **33** |

**Лару**

## Унчченхи йышăнăва улшăнусем кĕртнĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2008 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнчи 26 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн депутатсен районти Пухăвĕн тăваттăмĕш созыври черетсĕр 27-мĕш ларăвĕ 2008 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче иртнĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕн ĕçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсем, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн представителĕсем хутшăннă.

Ларура «Депутатсен районти Пухăвĕн 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» 21/6 № йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен» ыйтăва сӳтсе явнă.

**Район хыпарĕсем**

## Ветерансем кăмăллă пулнă

Район администрацийĕ район пуласлăхĕпе малашлăхĕшĕн, экономикăпа социаллă пурнăçне аталантарма пысăк вăй хунă аслă ăру çыннисене яланах пысăк тимлĕх уйăрать. Нумаях пулмасть Республика кунне уявланă май «Муркаш районĕ: ĕнер, паян, ыран» ятпа сăн ӳкерчĕксен вернисажне йĕркеленĕ. Унта район аталанăвĕн историне сăнласа панă.

Республикăн тĕп уявĕ тĕлне историпе краеведени музейĕнче «Муркаш районĕ: вăхăтсен чĕрĕ çыхăнăвĕ» çĕнĕ выставка уçăлнă. Унта вара хăйсен кулленхи хастар ĕçĕпе район историйĕнче уйрăмах палăрса юлнă çынсем пирки каласа панă.

Нумаях пулмасть ун чухнехи вăхăт паттăрĕсем – район активĕн представителĕсем район пуçлăхĕпе Юрий Александрович Ивановпа тĕл пулнă. Тĕл пулура Республика кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Тĕрлĕрен ответлă вырăнсенче ĕçленĕ П.А. Журавлев, В.Ф. Григорьев, унăн мăшăрĕ В.Г. Григорьева, В.С. Краснов тата ыттисем хăйсен ĕçхĕлне аса илнĕ.

Юрий Александрович ветерансене районăн кăçалхи пĕрремĕш çур çулти экономикăпа социаллă аталанăвĕ пирки каласа панă, район пирки асăнмалăх парнесем панă. Районти историпе краеведени музейĕнче, физкультурăпа спорт комплексĕнче, ачасен Муркашри искусство шкулĕнче, Кашмашри модернизациленĕ база Культура çуртĕнче пулса курнă май ветерансем питĕ кăмăллă пулнă, район епле аталанса улшăннине хăйсем курса ĕненнĕ.

**Хамăр инф.**

**Вырма – 2008 умĕн**

## Тĕрĕслев комиссине йĕркеленĕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕ июлĕн 17-мĕшĕнчи хушăвĕпе кăçалхи тыр-пула çухатусемсĕр пухса кĕртессишĕн тăрăшма тата çакна валли хатĕрленӳ ĕçĕсене тивĕçлĕ шайра ирттерме, вырма вăхăтĕнче пушар хăрушсăрлăхне пăхăнса ĕçлеме, ĕç хăрушсăрлăхĕн техникине пăхăнма, тырă типĕтмелли агрегатсене тĕрĕслеме комисси çирĕплетнĕ. Комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. К. Ананьев.

Комиссин çывăх вăхăтрах ял хуçалăх предприятийĕсем вырмана епле хатĕррине пăхса тухмалла, вырăнсенче ĕçсем епле пынине район хаçачĕ урлă пĕлтерсех тăмалла.

**Хамăр инф.**

**Район çыннисене пĕлме**

## *Халăхпа сӳтсе яваççĕ*

Раççей Федерацийĕн 2003 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче йышăннă «Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелесси çинчен» 131-ФЗ Саккунĕн 28-мĕш статйипе тата ял тăрăхĕсен Уставĕсемпе килĕшӳллĕн кăçалхи июль–август уйăхĕсенче ял тăрăхĕсен генеральнăй планĕсен проекчĕсем тĕлĕшпе публичнăй слушанисем ирттерме палăртнă.

Публичнăй слушанисене ял тăрăхĕн территорийĕнче вĕçĕм пурăнакан граждансем хутшăнаççĕ. Ял тăрăхĕсен генеральнăй планĕсен проекчĕсене пăхса тухнă чухне публичнăй слушанисене хутшăнакансем хăйсен сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене пĕлтерме пултараççĕ. Хыççăн ăна тивĕçлĕ решени йышăнма ял тăрăх депутачĕсен Пухăвне ярса параççĕ.

Публичнăй слушанисем иртекен вырăнпа вăхăчĕ пирки граждансене ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пĕлтереççĕ.

**Ял тăрăхĕсенчи тĕл пулусем**

## Сирĕн ыйтусене хуравлĕç

Июлĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 16-мĕшĕччен ятарлă ушкăнсем ял тăрăхĕсене граждансемпе тĕл пулма вырăнсене тухса çӳрессине йĕркелеме палăртнă. Ку ушкăнсен йышĕнче районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, социаллă пулăшу паракан центрăн, РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн специалисчĕсем пулаççĕ. Граждансене çак ыйтусемпе йышăнаççĕ:

– социаллă пакетпа усă курасси (2009 çул валли социаллă пакет илме килĕшменнисенчен заявленисем йышăнасси);

– пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлеме субсиди уйăрса парасси;

– ача-пăча пособийĕсем пирки;

– ĕç ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене, инвалидсене тата граждансен ытти категорийĕсене паракан çăмăллăхсем пирки.

Тĕл пулусем 10 сехетре пуçланаççĕ.

Юнашар таблицăра ял тăрăхĕсенче иртекен тĕл пулусен графикне пичетлетпĕр.

| Ял тăрăхĕсем | Тĕл пулу кунĕ |
|---|---|
| Уйкас Янасал | Июлĕн 25-мĕшĕ |
| Мăн Сĕнтĕр | Июлĕн 29-мĕшĕ |
| Ильинка | Июлĕн 31-мĕшĕ |
| Катькас | Августăн 5-мĕшĕ |
| Муркаш | Августăн 7-мĕшĕ |
| Москакасси | Августăн 12-мĕшĕ |
| Оринин | Августăн 14-мĕшĕ |
| Çатракасси | Августăн 19-мĕшĕ |
| Турай | Августăн 21-мĕшĕ |
| Хорнуй | Августăн 26-мĕшĕ |
| Чуманкасси | Августăн 28-мĕшĕ |
| Шетмĕпуç | Сентябрĕн 2-мĕшĕ |
| Юнкă | Сентябрĕн 4-мĕшĕ |
| Йӳçкасси | Сентябрĕн 9-мĕшĕ |
| Ярапайкасси | Сентябрĕн 11-мĕшĕ |
| Ярославка | Сентябрĕн 16-мĕшĕ |

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан пирĕн чунтан юратнă мăнаки **Марианна Терентьевна СЕРГЕЕВА** паянхи ăшă кунра 95 çул тултарать. Эпир ăна чун-чĕререн çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр, унпа мăнаçланатпăр, ăна мухтатпăр. Тепĕр юбилейччен пурăнма çирĕп сывлăх, вăй-хăват сунатпăр, сирĕн пурăнса ирттернĕ çулсем – сирĕн пуянлăх. Тата та пуянрах пул, Марье аки.

**Ăшă салампа Черновсен, Гурьяновсен çемйисем, вĕсен ачисем, мăнукĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, кукамая – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Анна Александровна СОКОЛОВАНА** июлĕн 21-мĕшĕнче 80 çулхи юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Пурнăçу çăмăл килмерĕ пулин те, эсĕ кирек епле ĕçрен те хăраса тăмарăн, ĕмĕр тăршшĕпех пур ĕçре те ырми-канми вăй хутăн. Сана малашне те тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, нумай çул тăванусене савăнтарса пурăнма çирĕп сывлăх, тумхахсăр кун-çул, тулли телей сунатпăр, çывăх тăванусене пулăшса пынăшăн сан вăйхăвату ӳссе пытăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 5 ывăлĕ, хĕрĕ, 5 кинĕ, 9 мăнукĕ, 2 кĕçĕн мăнукĕ, мĕн пур тăванĕ.**